

С.Михайлов.

# Ĕненӳшĕн! Чăнлăхшăн!

*Çĕршыв историйĕнче иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕшпе 50-мĕш çулĕсем культура ӳсĕмĕпе, коллективлă хуçалăхсем йĕркеленипе, индустрие сулмаклă утăмсемпе атапантарнипе çеç мар, уйрăм çын интересĕсене ним вырăнне хуманнипе те, пурлăхшăн, ĕненӳшĕн, ыттисенчен хастартарах ĕçленĕшĕн айăпласа тĕп тунипе те палăрса юлчĕç.*



Д.Архипов.

## Синкер шăпаллисем

«Аставăм кĕнекине» Вăрмар районĕнчен 1917-1950 çулсенче политика репрессийĕсенче шар курнă 397 çын ячĕ кĕнĕ. Вĕсем следствипе судсен хучĕсем тăрăх шутласа кăларнисем. Ахăртнех, çак тапхăрта районта айăпсăр айăпланнисем татах та пур. Чăваш патшалăх истори архивĕн директорĕ Г.Ертмакова хальхи вăхăтра 1917 çул хыççăн экономика енĕпе хур курнисен ĕçĕсене тишкернине пĕлтерчĕ. Кулак тесе айăпланă çынсен кун-çулĕ çăмăл пулман. Вĕсен пурлăхне туртса илнĕ, виçесĕр пысăк налук хунă, саккунлă ирĕксемпе правасăр хăварнă, ялтан хăваласа кăларса аякри çĕрсене ăсатнă.

Акă манăн алăра «Чăваш – Шупашкар епархийĕн Синодикĕ». Кĕнекере совет влаçĕ хĕсĕрленĕ чиркӳ çыннисем пирки çырса кăтартнă. Çĕр-çĕр хушамат, инкек тӳснĕ айăпсăр çынсен ячĕсем. 1938 çул тĕлне Чăваш Республикинче айăпланман священник юлман та пулас: хăшĕсене тĕрмесенче çĕртнĕ, теприсене персе вĕлернĕ... Мĕншĕн?! Ĕненӳшĕн! Чăнлăхшăн! 1917 çулхи пăлхавăрсем хыççăн чиркĕве патшалăхран уйăрнă. Священниксене тата чиркӳпе çыхăннă ытти çынна çĕнĕ пурнăçшăн хăрушă элементсем тесе айăплама тытăннă. Паллах, И.Я.Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухнă, пĕр вăхăт учительте, кайран священнике тухнă ентешсем те çак синкер шăпаран пăрăнса юлайман.

## Ватлăхра – ссылкăна

...Семен Михайлович Михайлов 1874 çулхи нарăсăн 3-мĕшĕнче Çĕрпӳ уесĕнчи Çăлпуç ялĕнче /халĕ Тăвай районĕ/ çуралнă. 1886-1890 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Учитель ятне илсен вăл пĕлĕвне ӳстерес тĕллевпе Чĕмпĕрти тĕн семинарине кĕресси пирки И.Я.Яковлевпа канашланă. Вĕрентекенĕ çак шухăша ырланă, мĕншĕн тесен семинарирен вĕренсе тухсан университета е академие кайма çул уçăлнă. Анчах та йĕрке тăрăх учителĕн икĕ çул шкулта ĕçлемелле пулнă! Мĕн тумалла?

Иван Яковлевич Семен Михайлова питĕ лайăх вĕреннине, малашлăхĕ пысăккине палăртса семинарие кĕме пулăшать. Унта 6 çул вĕренме тивнĕ. Чăваш шкулĕнчен вĕренсе тухнă ачасене çăмăллăх панă, вĕсем икĕ çул çеç пĕлӳ пухнă. Семинаристсем Чĕмпĕр чăваш шкулĕн общежитийĕнчех пурăннă. Çавăнпа та И.Яковлев хăйĕн вĕренекенĕсен ĕç-хĕлĕ пирки пĕлсе тăнă. 1897 çулта семинарирен вĕренсе тухсан С.Михайлова Çĕрпӳ уесĕнчи Патти чиркĕвĕн священникĕнче тата земство училищин заведующийĕнче ĕçleме çирĕплетнĕ. Унччен унта Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вырăс сăмахлăхĕн вĕрентекенĕ пулнă Петр Васильев пачăшкăра тăнă. Ăна Энĕшпуçĕнчи чиркӳ настоятельне куçарнă. Семен Михайлович лайăх вĕрентекен пулни çинчен Чупай çыннисем М.Шигильдеева, А.Леонтьева, Л.Матвеев каласа панăччĕ. Вĕсен çывăх тăванĕсем 1900 çулта Паттири училищĕре пĕлӳ илнине çирĕплетекен сăн ӳкерчĕк те упранать.

1910 çулта С.Михайлова Хусана куçарнă. 1915-1918 çулсенче вăл 84-мĕш пехота дивизийĕн çар священникĕ пулнă. 1918 çулта Хусанти кафедральнăй собор священникĕ туса хунă. 1923 çулта ăна Шупашкар епископĕн тата Хусан викарийĕн санне панă. Çак çултан унăн пурнăçĕнче пысăк инкексем пуçланнă. Чиркӳ çынни пулнăран шанчăксăрриcен шутне кĕртсе виçĕ çуллăха Вятка кĕпĕрнине ссылкăна ăсатнă. Семен Михайлович тĕрлĕ çулта тĕрлĕ епархи епископĕ тата викарийĕ пулнă. 1939 çулта ватлăхне кура канăва тухнă, тăван çĕршывне – Чăваш Ене – таврăннă. Ачалăхри тата çамрăклăхри аса илӳсемпе нумаях пурăнайман вăл – çулталăкран, 1940 çулхи авăн уйăхĕнче, арестлесе пилĕк çуллăха Красноярск тăрăхне ссылкăна янă. Тертпе нуша, выçлăхпа асап 69-ти арçынна йăлтах çапса хуçнă: Семен Михайлов 1943 çулхи çу уйăхĕн 14-мĕшĕнче пурнăçран уйрăлнă.

## Протоиерейĕн ăраскалсăр кун-çулĕ

Сармантей саманин саламатне тепĕр ентешĕмĕрĕн, тĕн çыннин Дмитрий Архиповăн тӳсме тивнĕ. «Константинопольти чăвашсем» кĕнеке /1903/ авторĕ 1868 çулта Çĕрпӳ уесĕнче Сĕнтĕр ялĕнче çуралнă. Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Учитель ятне Чĕмпĕрти учительсем хатĕрлекен семинарире экзамен парса илнĕ /анкетăра хăй çапла çырнă/. Пенза кĕпĕрнинче, Самар тăрăхĕнче учитель те тата священникре ĕçленĕ.

1917 çулта пуп тесе ăна вĕрентӳ ĕçĕнчен вăйпах уйăрнă. Архиповсен /мăшăрĕ – Евдокия Платоновна, вырăс чĕлхипе литература учителĕ/ 6 ача пулнă. Вырăнти влаç вĕсене çемье пысăккине пăхмасăрах 24 сехет хушшинче Чăваш Республикине тухса кайма хушнă. Çапла пурлăхсăр, нимсĕр-мĕнсĕр инçе çула пуçтарăнса тухнă. Малтанлăха ниçта вырнаçаймасăр Сĕнтĕрте /унта та чарăнма юраман/, Тăвайĕнче пурăннă, кайран Канаш районĕнчи Кĕçĕн Кипеч ялĕнче тĕпленнĕ. Дмитрий атте кунти чиркӳре ĕçлеме пуçланă. Каллех инкек...

1935 çулта Мăнкун кунĕнче чиркĕве НКВД çыннисем персе çитнĕ. Мăнкун кĕлли пуçлама хатĕрленекен священнике ял çыннисем пытарса ĕлкĕрнĕ, анчах «влаçсем» темиçе çынна арестлесе илсе кайнă. Ырă чунлă Дмитрий атте ял-йыша хурлăхлă шăпаран хăтарас тесе хăех НКВДана пынă. Ăна тата Кипечри çичĕ çынна темиçе çуллăха тĕрмене хупма йышăннă. Дмитрий Архипова 5 çул «лекнĕ».

Д.Архиповăн хĕрĕ Лидия Дмитриевна çапла аса илнĕ: «Пирĕн çемьере 6 ача пулнă. Халĕ эпĕ кăна пурăнатăп. Аттене Улатăр тĕрмине хупса хурсан анне Евдокия Платоновна хула таврашĕнчи ялсенче ыйткаласа çӳренĕ, мĕн пуçтарнă пеккине аттене кайса панă. Ăна, ватăскере, йăлтах хĕнесе пĕтернĕ, аллисене амантнă. Унччен вăл питĕ хитре сăпатасем хуçма пĕлетчĕ. Часах вăл суккăрланнă. Апат çитменни, сывлăх хавшани тĕрме пульницине илсе çитернĕ, анчах вăл унта та самайланайман. 1939 çулхи нарăсăн 27-мĕшĕнче Улатăрти 1-мĕш тĕрме больницинче пурнăçран уйрăлнă».

Çапла таталнă чăвашран тухнă чи пирвайхи çыравçăсенчен пĕрин, «Константинопольти чăвашсем» кĕнеке авторĕн, чăвашсене çутта кăларма ăнтăлнă Дмитрий Архипович Архипов протоиерейăн ăраскалсăр кун-çулĕ.

* * *

1990 çулта айăпсăр айăпланнисене тӳрре кăларас ĕç-хĕл пуçлансан ыттисемпе пĕрлех синкер курнă священниксен таса ячĕсене те таврăрчĕç. Вĕсен шутĕнче И.Я.Яковлев шкулĕнче пĕлӳ илнĕ С.Михайловпа Д.Архипов та пур.

**Василий ЦЫФАРКИН**